# Анлăн паллă турĕç




Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, чаплă композитор тата паллă драматург Федор Павлович Павлов çуралнăранпа 80 çул çитнине республикăри общественность анлăн паллă турĕ. Виçĕмкун, сентябрĕн 25-мĕшĕнче, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕпе И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство университечĕн историпе филологи факультечĕн Ученăй совечĕсем тата Чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕ çак ятпа пĕрлехи лару ирттерчĕç. Унта филологи наукисен кандидачĕ В. Я. Канюков доцент «Ф. П. Павловăн илемлĕ литература творчествин халăхлăхĕ пирки» доклад туса пачĕ, искусствоведени кандидачĕ Ф. А. Романова Ф. П. Павловăн чăваш театрне аталантарас ĕçри ролĕ çинчен, республикăри учительсен пĕлĕвне ÿстерекен институтри музыка кабинечĕн заведующийĕ А. И. Ефимов Ф. П. Павлов çырнисен икĕ томлă пуххине кĕмен хăшпĕр ĕçсем çинчен каласа кăтартрĕç. Ларура пулнисем çаван пекех Федор Павлович çинчен Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ П. Н. Осипов, Чăваш АССР халăх артисчĕ И. С. Максимов-Кошкинский тата С. М. Максимов композитор арăмĕ М. С. Максимова аса илнисене питĕ интересленсе итлерĕç.

Каçхине Шупашкарти Ф. П. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищин концерт залĕнче юбиляра чысласа вечер-концерт пулса иртрĕ. Ф. П. Павловăн музыкăпа литература творчестви çинчен Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ю. А. Илюхин музыковед доклад туса пачĕ. Ун хыççăн Федор Павлович çинчен унпа пĕр ялта çуралса ÿснĕ, пĕрле вĕреннĕ юлташĕ Л. А. Анисимов, мухтавлă композитор ученикĕсем РСФСР халăх артисчĕ, СССР государство премийĕн лауреачĕ Ф. М. Лукин тата Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ П. К. Алешин аса илсе каласа пачĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Телевиденипе радиовещани комитечĕн хорĕ, Чăваш музыка театрĕн симфони оркестрĕн солисчĕсем тата государство филармонийĕн артисчĕсем Ф. П. Павлов произведенийĕсенчен йĕркеленĕ концерт кăтартрĕç.

**Укерчĕк çинче: телевиденипе радиовещани комитечĕн хорĕ концертра.**

Г. Зиньков фотоÿкерчĕкĕ.